Исаев В. Чӗнтӗрлӗ хапха : [К.В. Иванов ӑсталанӑ хапха ҫинчен] / В. Исаев // Ялав. – 1984. – № 5. – С. 32.

# Чӗнтӗрлӗ ХАПХА

Вунҫичӗ томлӑ чӑваш словарӗн авторӗ Ашмарин профессор хапха сӑмах пӗлтерӗшне ӑнлантарма халӑхра ҫӳрекен ытарлӑ ҫаврӑнӑшсем чылай ҫырса илнӗ: «Юмах юпа тӑрринче, халап хапха тӑрринче», «Шӑнкӑр-шӑнкӑр туй килет, аслӑ хапхаран тухать те кӗҫӗн хапхаран кӗрет», «Уҫсам, хӑта, хапхуна, хапха укҫи парӑпӑр», «Вырӑсла хапха умӗнче сар хӗр тӑрать савӑнса»... Мӗн чухлӗ ӑшӑ сӑмах каланӑ иккен хамӑр куллен кӗрсе-тухса ҫӳрекен сар хапха ҫинчен. Хапха — хуҫи ырӑ пулнине, тарават кӑмӑллӑ та юр-варлӑ тӑнине, тирпей-илеме хисепленине те пӗлтерет-мӗн.

Константин Иванов «Нарспи» поэмӑра Силпи ялӗн илемне сӑнарланӑ чухне ҫапла шӑрантарать:

*Силпи ялӗ пуян ял,*
*Ларать вӑрман ӑшӗнче.*
*Кантур пекех ҫурчӗсем*
*Ват йӑмрасем айӗнче...*
*Ҫуртсем тавра килкарти*
*Чул хӳме пек ҫаварнӑ.*
*Сарӑ хапха килсерен*
*Чӗнтӗрленӗ тӑраллӑ.*

Чӗнтӗрленӗ тӑраллӑ сарӑ хапха!.. Ана поэт хӑй произведенийӗнче кӑна мар, тӑван килӗнче, чул ҫуртпа юнашар, ӑсталаса лартас ӗмӗтпе хӗмленнӗ. Чӗмпӗрте учитель ятне илнӗ хыҫҫӑн, И. Я. Яковлев ӗҫ парасса кӗтнӗ вӑхӑтра, вӑл темиҫе уйӑх килте пурӑннӑ. Шкулта вӗреннӗ чухнех каскалама, тӗрлӗ эреш-илем ӑсталама юратнӑскер, Константин Васильевич килте ахаль ларман, питӗ хавхаланса ӗҫленӗ. Вӑл хӑй аллипе ҫаврака тӑраллӑ крыльца, чӳрече рамисем, кил-терӗшре тыткаламалли хатӗрсем, сӗтелпукан, шкап тунӑ. Унтан вӑл чӗнтӗрлӗ хапха чертежне хатӗрленӗ, хыр пӗрене ҫурса, сар хӑмаран тӗлӗнмелле хӳхӗм хапха туса лартнӑ. *Ял халӑхӗ астӑвасса,* «Нарспи» авторӗ ӑсталанӑ чӗнтӗрлӗ хапха таврара чи хитри пулнӑ. Илем тени яланах илӗртет, ҫакна кура ялти ӑстасем те, хӑма ҫуртарса, ҫакӑн йышши хапхасем чылай лартнӑ. Шел пулин те, К. В. Иванов хӑй аллипе тунӑ хапха паян куна ҫити сыхланса юлайман.

Поэт ҫуралнӑ Слакпуҫ ялне, Силпи таврашне, Чӑваш АССР тава тивӗҫлӗ художникӗ Петр Сизов пӗрре мар ҫитсе курчӗ. Кунтан вӑл «Нарспи» поэмӑна ӳкерчӗксемпе илемлетсе ҫӗнӗрен кӑларма ҫӗршер этюд ҫырса таврӑнчӗ. Шӑнкӑр-шӑнкӑр юхакан ҫӳллӗ валак пуҫӗнчи Нарспипе Сетнере, чӗнтӗрлӗ хапхасем умӗнчи туй ҫыннисене, ҫӗр ҫӗмӗрсе ташлакан пуса каччисене хӑйӗн произведенийӗсене кӗртрӗ. Силпи ялне «Нарспи» поэмӑри пек сӑнарлама художникӑн ку таврара чӗнтӗрлӗ хапхасем самаях шырама тивнӗ: вӗсенчен чи илемлисем кӑна тивӗҫтернӗ-ҫке ӑстана. Телее пула, вӑл Константин Иванов ӑсталанӑ хапхан хӑшпӗр пайӗсене тупать, вӗсене пӗрлештерсе, хапхан пӗтӗмӗшле ӳкерчӗкӗн эскизне тӑвать. Поэт хапхи ҫакӑнта пичетленекен ӳкерчӗкри майлӑ пулма пултарнӑ, теҫҫӗ. Ку шухӑша ҫав хапха алӑкне хӑй вӑхӑтӗнче пӗрре мар уҫса хупнӑ Ухсай Яккӑвӗ те ҫирӗплетет.

Пирӗншӗн «Нарспи» авторӗ хӑй аллипе тунӑ кашни япала хаклӑ. Поэзире вӑл шӑрантарнӑ кашни йӗрке асра упраннӑ пек, унӑн аласти ӗҫӗсем те пысӑк пӗлтерӗшлӗ. Вӗсем поэтӑн пурнӑҫӗпе тӗплӗнрех паллашма май параҫҫӗ, унӑн пултарулӑхӗ нумай енлӗ те тарӑн пулнине яр-уҫҫӑн кӑтартаҫҫӗ. Сӑмах май ҫакна та каласа хӑварас килет: поэтӑн илемлӗ произведени пек курӑнакан чӗнтӗрлӗ хапхине Слакпуҫӗнчи музей-ҫурчӗ ҫумӗнче ҫӗнӗрен туса лартсан лайӑхчӗ.

**В. ИСАЕВ.**